# Профессор парни

Сентябрь пуҫламӑшӗнче Литература музейӗнче паллӑ ентешӗмӗр Г. Н. Волков академик ҫырнӑ «Кил илемӗ» кӗнекен презентаций пулчӗ.

Юбилей кӑларӑмне кӗҫӗн тата вӑтам ҫулхи шкул ачисем валли пухса хатӗрленӗ. Унта Геннадий Никандрович пӗчӗк чухне асламӑшӗнчен, ӳссен ытти ҫынсенчен илтсе ҫырса пынӑ юмахсене, каярахпа хайланӑ калавӗсене, очеркӗсене кӗртнӗ. Хӑшне-пӗрне чӑваш вулаканӗсем пӗлеҫҫӗ, ҫӗннисем те пур. Кашни хайлавӗ пурнӑҫа вӗрентет, ӑс парать. Пысӑк мар вӗсем, анчах кашнинче вун-вун ӑрури пин-пин ҫын ӑс-тӑнӗ. Кӗнекен ум сӑмахӗнче педагогика наукисен докторе В. А. Иванов профессор ҫакӑн пек тӗслӗх илсе парать: «Ылтӑн ҫӗр» юмаха Геннадий Никандрович хӑй ӗмӗрӗнче темиҫе хут та илтнӗ, унӑн тӑвата вариантне ас туса юлнӑ. Алла ручка тытса ҫырма ларсан ҫак юмахӑн тӑваттӑмӗш вариантне тӗпе хунӑ. Ӑна вӑл Тутар республикине кӗрекен Кӑнна Кушкинче пурӑннӑ, хутла пӗлмен А. П. Воронов колхозникран илтнӗ. Алексей мучи юмахӗнче Г. Волков тӑван халӑхӑн авалхи кун-ҫулне аса илтерекен манӑҫми самантсене туйса илнӗ. Чӑваша ҫутта кӑларнӑ Иван Яковлевичпа пӗр ялта ҫуралса ӳснӗ юмахҫӑ сӗрме купӑс ӑсти пулнӑ иккен. Ҫавӑнпа-и, тен, юмахӗ те илемлӗ кӗвӗ пек янӑрать».

Кӗнекине ӑсчах ахальтен мар «Кил илемӗ» тесе ят панӑ. «Кил» тени Геннадий Волковшӑн ҫуралса ӳснӗ ҫурт ҫеҫ мар, ҫарран чупса ҫӳренӗ улӑх-ҫаран кӑна та мар, пӗтӗм Чӑваш ҫӗршывӗ. Ҫемьери, йышри ырӑ кӑмӑллӑх, туслӑх, юрату, ҫураҫупа килӗшӳ ҫинчен сӑмахлать вӑл вулаканпа. Вӗсем пулсан кил никӗсӗ ҫирӗп вара, ӑш-чикӗ те ӑшӑ, илемлӗ. Ваттисене хисеплемен, сума суман ҫамрӑксенчен пархатар ҫук. Ҫак шухӑша та ҫине-ҫинех палӑртать педагог тата писатель. Ватӑ ҫынна хисеплеме, юратма чун илемӗ кирлӗ, тата... пурнӑҫа кӑшт маларах курса тӑма пӗлни. Пурте ватӑлатпӑр, халсӑрланатпӑр.

«Йӗркелӗх», «Перекетлӗх» ятлӑ хайлавӗсене вулар-ха тата. Курӑр-ха, епле лайӑх каланӑ: «Йӗпе тӑк – шӑлса тасат, нӳрӗ тӗк – типӗт, шӑтнӑ тӑк – сапла, уйрӑлса кайнине – сыпӑнтар, ваннине – ҫыпӑҫтар, сӳтӗлнине – явса

хур, пушаннине – хытар, ӳкнине – ҫӗкле, чалӑшнине – тӗревпе ҫирӗплет, лапӑртаннине – тасат...» Йӗрке пулмасан пурнӑҫ малалла каймӗ.

«Перекетлӗх те пысӑк пуянлӑхах», – тет кӗнеке авторӗ. «Пысӑк тупӑш илекенсем мар, укҫа-тенкӗпе япалана тирпейлӗ тыткалакансем лайӑх пурӑнаҫҫӗ. Тӗнче аслӑ – вӑл тем те ҫӑтса яма пултарать».

Кӗнеке вӗҫӗнчи йӗркесем вара пил пекех янӑраҫҫӗ: «Япӑх пурӑнсан та кун-ҫул иртет, лайӑх пурӑнсан та... Лайӑх пурӑн!»

З. Черновӑпа И. Алексеев художниксем чӑваш тӗррисемпе, юмах-калавсен содержанине уҫса паракан ӳкерчӗксемпе пуянлатнӑран кӗнеке ҫав тери илемлӗн курӑнать, унран чун ӑшши килсе тӑнӑнах туйӑнать. Алла тытма кӑмаллӑ.

Г. Матвеева

Матвеева, Г. Профессор парни : [Г. Волков ҫырнӑ «Кил илемӗ» кӗнеке ҫинчен] / Г. Матвеева // Халӑх шкулӗ=Народная школа. – 2007. - № 5. – С. 90